ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХ ОРГАНЕСЕН СУЙЛАВĔ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ çинчен" 2003 çулхи чӳк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 41 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2003, 57 №; 2005, 63 №; 2006, 66, 70 №-сем; 2007, 73 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 85 №; 2011, 88 №; 2012, 92 (I том), 95 №-сем; "Республика" хаçат, 2012, раштав уйăхĕн 29-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 10 №; 2014, 9, 12 №-сем; 2015, 5 №; 2016, 4 №; 2017, 3 №; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 31-мĕшĕ; 2019, пуш уйăхĕн 13-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 5-мĕшĕ; 2020, ака уйăхĕн 29-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 3-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ; 2021, çу уйăхĕн 26-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, çу уйăхĕн 5-мĕшĕ, çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, ака уйăхĕн 5-мĕшĕ, çу уйăхĕн 31-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2023, раштав уйăхĕн 4-мĕшĕ, 0000000000002727 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 20 статьяна çакăн пек çырса 4^3-мĕш пункт хушса хурас:

"4^3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавне ирттернĕ чухне кандидат кандидата, кандидатсен списокне регистрацилеме кирлĕ документсене тăратнă самант тĕлне ют çĕршыв агенчĕ статусне пăрахăçлама тивĕçлĕ.";

2) 22 статьян 3-мĕш пунктне çакăн пек çырса тăваттăмĕш çĕнĕ предложени хушса хурас: "Уйрăм кандидат тĕлĕшпе суйлава йĕркелекен суйлав комиссине тăратнă документсене çырса хатĕрленĕ чухне йăнăшсем (пичетленнĕ йăнăшсем) туни пĕр мандатлă тивĕçлĕ суйлав округĕнче тăратнă гражданина шанчăклăн палăртма май паман чухне суйлава йĕркелекен суйлав комиссийĕ тивĕçлĕ кандидата пĕр мандатлă суйлав округĕсем тăрăх тăратнă кандидатсен списокĕнчен ăна çирĕплетиччен кăлармалли сăлтав шутланать.";

3) 24 статьяна çакăн пек çырса 5^2-мĕш пункт хушса хурас:

"5^2. Енчен те тивĕçлĕ суйлав округĕ тăрăх суйланма килĕшни çинчен çырнă заявленире кандидат ют çĕршыв агенчĕ пулни çинчен калакан сведенисене кăтартнă пулсан, кандидат кандидатсене, кандидатсен списокĕсене регистрацилекен суйлав комиссине кандидата регистрацилеме кирлĕ ытти документсемпе пĕрле кандидата ют çĕршыв агенчĕсен реестрĕнчен кăларни çинчен федерацин ĕç тăвакан влаçĕн коммерциллĕ мар организацисене регистрацилес сферăра патшалăх политикине туса хатĕрлес тата пурнăçлас тата ăна нормативлă право тĕлĕшĕнчен йĕркелесе пырас енĕпе ĕç-хĕл пурнăçлакан органĕн пĕлтернине е тата судăн тивĕçлĕ йышăнăвне тăратать.";

4) 34 статьян 4-мĕш пунктĕнче "ют çĕршыв агенчĕ шутланакан кандидата," сăмахсене тата "ют çĕршыв агенчĕ е" сăмахсене кăларса пăрахас;

5) 38 статьяна çакăн пек çырса 5^1-мĕш пункт хушса хурас:

"5^1. Суйлав фончĕсем тăкаклакан (кандидата, кандидатсен списокне регистраци тăвиччен тăкаклама юракан) укçа-тенкĕн чи пысăк виçи суйлав фончĕ тăкаклакан укçа-тенкĕн чи пысăк виçин (ăна çак Саккунпа палăртнă) 30 проценчĕпе танлашать.";

6) 43 статьяра:

а) 6^1-мĕш пунктра "ют çĕршыв агенчĕ е" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) 17-мĕш пункта çакăн пек çырса хурас:

"17. Сасăлав кунĕнче (сасăлавăн юлашки кунĕнче) сасăлав вăхăчĕ вĕçленнĕ хыççăн суйлав комиссийĕсенче усă курмасăр юлнă бюллетеньсене Федераци саккунĕн 68 статйин 3-мĕш пункчĕн требованийĕсемпе килĕшӳллĕн шутласа тухаççĕ тата пăрахăçлаççĕ. Мĕнпур суйлав комиссийĕсенче, участокри суйлав комиссийĕсемсĕр пуçне, усă курман бюллетеньсене пăрахăçланă чухне пăрахăçланă бюллетеньсен хисепне кăтартса акт çыраççĕ. Бюл-

летеньсене пăрахăçланă çĕре Федераци саккунĕн 30 статйин 3-мĕш пунктĕнче кăтартнă çынсем хутшăнма пултараççĕ. Çав бюллетеньсене суйлав комиссийĕн секретарĕ суйлав комиссийĕн ытти документçĕсемпе пĕрле упрать.".

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулли
2024 çулхи çĕртме уйăхĕн 14-мĕшĕ
36 №